Шупашкар район хаҫачӗ ❋ 1932 ҫулхи июлӗн 27-мӗшӗнче тухма пуҫланӑ

# ТӐВАН ЕН

120 (9110) № ❋ 2005 ҫулхи октябрӗн (юпа уйӑхӗн) 19-мӗшӗ. Юн кун ❋ Хакӗ ирӗклӗ

## ШУПАШКАР РАЙОН АДМИНИСТРАЦИЙӖН ПУҪЛӐХӖ - КНЯЗЕВ АНАТОЛИЙ ПАНТЕЛЕЙМОНОВИЧ

**1960-мӗш ҫулта Чӑваш Республикинче, Елчӗк районӗнчи Тӗмерте ҫуралнӑ.**

**Вӑтам шкул хыҫҫӑн - 1978-1980 ҫулсем - Совет ҫарӗнче службӑра тӑнӑ.**



**Вӗреннӗ: 1981-1984 ҫулсем - Усольскри ял хуҫалӑх техникумӗ, 1984-1989 ҫулсем - Чӑваш ял хуҫалӑх институчӗ.**

**2000-2003 ҫулсем - Атӑлпа-Вятка хушшинчи патшалӑх тата муниципалитет службин академийӗ.**

**Ӗҫleме 1974 ҫулта «Слава» хуҫалӑхра пуҫланӑ.**

**1984-1994 ҫулсем - Шупашкар районӗнчи Ленин ячӗллӗ колхоз.**

**1994-1999 ҫулсем - Апаш ял администраци пуҫлӑхӗ.**

**1999-2001 ҫулсем - Шупашкар районӗн ял хуҫалӑхӗпе апат-ҫимӗҫ управленийӗн пуҫлӑхӗ, район администрацийӗн пуҫлӑхӗн заместителӗ.**

**2001-2002 ҫулсем - Шупашкар район администрацийӗн пуҫлӑхӗн пӗрремӗш заместителӗ, ял хуҫалӑх управленийӗн пуҫлӑхӗ.**

**2002 ҫулхи январьтен - 3 уйӑх - тивӗҫӗсене пурнӑҫлаканӗ, унтан - Шупашкар район администрацийӗн пуҫлӑхӗ.**

**2005 ҫулхи октябрӗн 16-мӗшӗнчи суйлавра Шупашкар район администрацийӗн пуҫлӑхӗ пулма ҫӗнӗрен суйланӑ.**

### *Хисеплӗ суйлавҫӑсем!*

***Иртнӗ суйлавра манӑн кандидатурӑшӑн сасӑланӑ мӗнпур суйлавҫӑна питӗ пысӑк тав сӑмахӗ калатӑп. Ҫакна эпӗ районӑмӑр ӗҫӗ-хӗлӗнче тытса пыракан ҫул-йӗре ырланӑ, район ертӳҫисене шаннӑ тесе хаклатӑп.***

***Суйлавҫӑсемпе нумай тӗл пулусем ирттертӗмӗр. Ҫавна кура малашнехи аталану планӗсене ҫӗнӗлле улшӑнусем кӗртӗпӗр тата вӑйлӑрах аталанма майсем тӑвӑпӑр.***

***Паян эпӗ кам хӑш кандидатурӑшӑн сасӑланине пӑхмасӑр пурне те пӗрле алла-аллӑн тытӑнса ӗҫleме чӗнсе калатӑп - район шӑпи пирӗн алӑра.***

**Анатолий КНЯЗЕВ.**

## РАЙОН АДМИНИСТРАЦИЙӖН ПУҪЛӐХӖН СУЙЛАВӖ

| | |
|---|---|
| Списока пӗтӗмпе кӗртнӗ суйлавҫӑсен хисепӗ: | **42208** ҫын |
| Юрӑхлӑ тесе шута илнӗ бюллетеньсен хисепӗ: | **17795** |

***Кандидатсем ҫакӑн чухлӗ сасӑ пухнӑ:***

| | |
|---|---|
| **Илларионов Анатолий Леонидович** | **6659** |
| **Ильин Владимир Германович** | **0473** |
| **Князев Анатолий Пантелеймонович** | **9112** |
| **Пушкин Александр Николаевич** | **0574** |

**Суйланнӑ тесе Князев Анатолий Пантелеймоновича йышӑннӑ**

## РАЙОН ДЕПУТАЧӖСЕН СУЙЛАВӖ

| Округ | Суйланнӑ |
|---|---|
| **Станьял** | **Егоров Вячеслав Анатольевич** |
| **Вӑрман-Ҫӗктер** | **Иванов Владимир Петрович** |
| **Чурачӑк** | **Фомиряков Андрей Викторович** |
| **Ишлей** | **Федоров Владимир Григорьевич** |
| **Атайкасси** | **Григорьев Владислав Вячеславович** |
| **Янӑш** | **Васильев Геннадий Леонидович** |
| **Кӑшавӑш** | **Яковлев Георгий Геннадьевич** |
| **Карачура** | **Игнатьева Галина Валерьевна** |
| **Тӗп суйлав округӗ** | **Андреев Александр Михайлович** |
| **Совет суйлав округӗ** | **Глазырина Валентина Алексеевна** |
| **Первомайски** | **Степанов Петр Александрович** |
| **Ҫатракасси** | **Платонов Николай Алексеевич** |
| **Сарапакасси** | **Петрова Зинаида Филимоновна** |
| **Ҫӗньял** | **Захаров Валентин Николаевич** |
| **Ҫырмапуҫ** | **Марков Вениамин Михайлович** |
| **Тренккасси** | **Константинов Вячеслав Леонидович** |
| **Шӑмӑш** | **Александров Илья Александрович** |
| **Тутаркасси** | **Сявась Леонид Васильевич** |
| **Ҫӗнӗ Тутаркасси** * | **-** |
| **Апаш** | **Смородинов Юрий Витальевич** |

* Суйлав иртмен

## ЕРТӲҪӖСЕМ ҪИЧӖ РАЙОНТА УЛШӐННӐ

Нумайӑшне хумхантарнӑ, теприсене хытах шиклентернӗ суйлав хыҫа юлчӗ. Республикӑн тӗп суйлав комиссийӗ унӑн пирвайхи пӗтӗмлетӗвне тунти кун пӗлтерчӗ. Халӗ хуласемпе район администрацийӗсен пуҫлӑхӗсем паллӑ. Чылайӑшӗнче малтанхисемех юлнӑ, теприсенче улшӑннӑ.

Хуласене илсен, ҫапларах: Шупашкара Н.И. Емельянов (суйлава хутшӑннисенчен уншӑн 63,4 процентӗ сасӑланӑ) ертсе пырӗ, Ҫӗнӗ Шупашкара - В.В.Андреев (70,1 процент), Канаша - В.И. Полукарова (83,7 процент), Ҫӗмӗрлене - В.М.Садырга (81,2 процент). Тепӗр майлӑ каласан, кусенче пуҫлӑхсем малтанхисемех юлнӑ. Улатӑр хулин мэрӗ вара ҫӗнӗ ҫын - М.В.Марискин (85,9 процент).

Райадминистраци пуҫлӑхӗн лавне малтанхи ертӳҫӗсемех туртакан районсем ҫаксем: Шупашкар районӗ - **А.П.Князев**, Улатӑр - **А.И.Блашенков,** Патӑрьел- **Н.И.Глухов**, Канаш - **С.В.Антонов,** Куславкка - **И.Г.Майоров,** Комсомольски - **Г.Ф.Волков,** Красноармейски - **С.А.Николаев**, Муркаш - **Ю.А.Иванов,** Ҫӗрпӳ - **Н.В.Евдокимов,** Шӑмӑршӑ - **В.П.Фадеев,** Ҫӗмӗрле - **В.А.Мурашкин,** Етӗрне - **Е.М. Янский,** Елчӗк - **Н.П.Миллин.**

Ҫичӗ районта ертӳҫӗсем улшӑннӑ. Элӗк районне А.И.Платонов ертсе пырӗ, Йӗпреҫе - А.И.Петров, Хӗрлӗ Чутая - А.И.Криков, Сӗнтӗрвӑрринe - А.А.Шумов, Пӑрачкава - Ю.А.Скрипилин, Вӑрмара - В.Н.Кириллов, Тӑвая - Н.И.Иванов.

**В.ЭВЕРККИ.**

## *АПАШСЕМ САСӐЛАВА АКТИВЛӐ ХУТШӐНЧӖҪ*

Политикӑлла активлӑх енчен суйлавра Апашсем те палӑрчӗҫ. Кӑнтӑрлахи апат тӗлне, Апашри 754-мӗш суйлав участокӗнче сасӑлав енчен чи лайӑх кӑтартуччӗ - суйлавҫӑсен списокне кӗртнӗ граждансенчен 42 процентӗ тивӗҫлӗ кандидатсемшӗн сасӑланӑ.

Суйлава пӗрремӗш хутшӑнакансен йышӗ 14 пулсан, 7-ӗн сасӑлава хутшӑнма вӑхӑт тупнӑ.

«Хыпар» хаҫатран ҫитнӗ журналистсемпе пӗрле суйлава хутшӑнакансен шухӑш-кӑмӑлӗсемпе паллашрӑмӑр.

Смородиновсен ҫемйи - Виталий Ивановичпа Элеонора Яковлевна: «Усӑсӑр утмастпӑр, камшӑн сасӑламаллине малтанах палӑртса хунӑ. Тивӗҫлӗ кандидатсене шанса сасӑлатпӑр, ыррине кӗтетпӗр»,- терӗҫ гражданла тивӗҫе пурнӑҫласа.

21-мӗш ӗмӗр чӑвашсен ӗмӗрӗ пулаять-и тесен, аслӑ ӑрури суйлавҫӑсем пӗр иккӗленмесӗр: «Ҫавӑншӑн пурӑнатпӑр, ҫавӑншӑн ӗҫлетпӗр. Чӑвашсене лайӑх енчен таҫта та пӗлеҫҫӗ-ха... Ҫамрӑксенче шанӑҫ, шанӑҫа тӳрре кӑлараҫҫех... Нумай тар юхтарса ӗҫлемелле, чӑваш ҫыннин вӑй-хӑвачӗ, ӗҫченлӗхӗ пысӑк, юратнӑ ӗҫре тӑрӑшса ӗҫлемелле кӑна,»- ҫапла хурав пулчӗ ентешӗмӗрсенчен.

**Н.СТЕПАНОВА.**

## *ТЕХНИКӐНА ХАКЛАНИ СИСӖНЕТ*

**Ял хуҫалӑх техникине хӗл каҫма лартнине тӗрӗслемелли смотра кӑҫал районта ытти ҫулхинчен иртерех йӗркелерӗҫ. Тӗрӗс те пуль пӗр енчен ҫавӑ: тумалли ӗҫе ӑна хӑть паян пурнӑҫла, хӑть каярах - пӗрех тытма тивет. Эрне кун комисси, ун йышӗнче Гостехнадзор управленийӗн пуҫлӑхӗ В.С.Михайлов, ял хуҫалӑхӗпе апат-ҫимӗҫ управленийӗн тӗп агрономӗ А.В.КРАСНОВ, М.П. АЛЕКСАНДРОВ тӗп инженер, райадминистрацин ӗҫ сыхлавӗн специалисчӗ Р.П.САМСОНОВ пулчӗҫ, тӑватӑ хуҫалӑха ҫитрӗҫ.**

Тӗрӗслев **«Приволжское» вӗренӳ хуҫалӑхӗнчен** пуҫланчӗ. Техникӑна хӗл каҫма лартнипе ку предприяти пӗлтӗр районта мала тухса республикӑра ҫӗнтерме пултарнӑччӗ. Ухозӑн бази те вӑйлӑ. Комисси членӗсем ун пекки республикӑра ҫуккине палӑртаҫҫӗ. Кӑҫал та вӗренӳ хуҫалӑхӗ техникӑна ретӗн-ретӗн илемлӗн вырнаҫтарса лартнӑ: пӗр ҫӗрте сеялкӑсем, тепринче культиваторсем, виҫҫӗмӗшӗнче жаткӑсем т.ыт.те вырӑн тупнӑ. Урапасене алюмини пудрипе сӑрланӑ. Сӗрмелли пайсене сӗрнӗ, консервацилемеллине консервациленӗ. Кӑткӑс ял хуҫалӑх техники ӑшӑ ангарта ларать. Ҫапах комисси членӗсем хӑш-пӗр асӑрхаттару турӗҫ. «Ытти хуҫалӑхпа танлаштарсан, лайӑх хатӗрленнӗ, анчах кӑҫал та сире республика шайӗнчи конкурса кӑларасшӑн», - пытармарӗ комисси.

**«Букет Чувашии» агрофирмӑн Ишлейри филиалӗ** те техникӑна куҫ пек упрамаллине асра тытни сисӗнет. Техника вырӑн тупнӑ территорие вӗсем карта тытса ҫавӑрнӑ (пӗлтӗр ун пек пулман). «Ҫыншӑн мар-ҫке, хамӑршӑнах», - тет агрофирма директорӗ П.А.Клочков.

Урлӑ выртакан тӑрӑх хур текен каларӑша асра тытни сисӗнчӗ-ха **Чурачӑка** ҫитсен, анчах техника сивӗ хӗлтен, йӗпе-сапаран шикленмесӗр хӗл каҫӗ кунта теме иртерех. «Эпир вӑл сеялкӑсемпе пӗрех акмӑпӑр», - терӗ хуҫалӑхӑн тӗп инженерӗ. Сӑмах ҫӗнӗ йышшине, харӑсах темиҫе операци тума



Фото ӳкерчӗкӗ авторӑн.

пултараканнине, шанни пирки пулчӗ.

**«Пучах»** колхоз та мӗн пур ӗҫе вӗҫне ҫитермен. Пуҫламан тени тӗрӗс мар пулӗччӗ, ҫапах йӗркелемелли-вырнаҫтармалли самай.

Хуҫалӑхсене пӗтӗмлетерех каласан, ҫапларах хаклама пулать: техникӑна хаклани сисӗнет, кӑлтӑкӗ вара, ахӑртнех, - тимӗр-тӑмӑр шайне юлнӑ техникӑна пуҫтарса хурасси е вырнаҫтарасси.

**В.ЭВЕРККИ.**

❂ **Ҫакӑн пек ретпе ларакан техникӑна пӑхма кӑмӑллӑ.**

❂ Прокуратурăра

# ĔÇШĔН ВĂХĂТРА ТӲЛЕ

**Саккун тăрăх пирĕн çĕршывра пурăнакан кашни çын хăй ĕçлесе илнĕ укçана уйăхра икĕ хут илме тивĕç. Малтанах аванс е çур уйăх ытларах ĕçленĕ хыççăн ĕç укçин пĕчĕкрех пайне. Тепĕр уйăха кĕрсен иртнĕ уйăхра ĕçлесе илнĕ укçана туллин алла памалла. Район прокурорĕн пулăшаканĕ А.П.СТЕПАНОВ каланă тăрăх, иртнĕ уйăхри ĕç укçине илесси пĕр уйăхран ытла тăсăлмалла мар.**

**Алексей Петрович ĕç укçи парăмĕсем çинче те чарăнса тăчĕ. Иртнĕ çул, сăмахран вăл вăтамран 8-9 миллион тенкĕ пулнă. Кăçалхи февралĕн пĕрремĕшĕ тĕлне 11 миллион тенке çитнĕ. Сентябрĕн пĕрремĕшĕ тĕлне тăвată миллион тенке юлнă.**

**- Алексей Петрович, эсир ĕç укçи мĕнле предприяти, кооператив мĕн вăхăт тӳлеменнине мĕнле çăл куççенчен пĕлетĕр?**

- Ытларах статистика уйрăмĕ урлă ытларах тата рабочисем те килеççĕ. Халĕ эпир ку енĕпе тимлĕрех ĕçлеме пуçларăмăр. Çырнă саккуна пăхăнмаллах, вăл хут çинче çеç ан юлтăр.

**- Паллă ĕнтĕ, саккуна пăсакан явап тытма тивĕç, ун пеккисем пур-и?**

- Малтанлăха асăрхаттарса хăваратпăр. Пĕрисем çакăн хыççăн ĕç-пуçа йĕркелесе яма тăрăшаççĕ пулсан, теприсен ĕç укçи парăмĕ çакăн хыççăн та ӳсме чарăнмасть. Иртнĕ çул икĕ ертӳçĕне дисквалификациленĕ, пĕринпе уголовнăй ĕç пуçарнă. Кăçал та пур ун пеккисем. «Дружба» патшалăх унитарлă предприятире ĕç укçине виçĕ уйăх илеймен, унăн сумми 412 пин тенке çитнĕ. Маларах, кăçалхи март уйăхĕн 5-мĕшĕнче район прокурорĕ И.И.Сорокин ертӳçине административлă майпа явап тыттарасси пирки ĕç пуçарнă, ĕç укçи вăхăтра тӳлеменшĕн ăна 600 тенкĕ штраф укçи тӳлеттернĕ. Анчах ку та пулăшман.

Тепĕр тĕслĕх. Кӳкеçре вырнаçнă «Водоканал» директорĕн те ĕç укçи вăхăтра тӳлеменшĕн айăпланма тиврĕ. Кăçалхи январь уйăхĕнчен пуçласа май уйăхĕччен кунта вăй хуракан 83 рабочи пилĕк уйăх ĕç укçи алла тытса курман. Маларах унăн директорĕн те административлă йĕркепе айăпланса 900 тенкĕ штраф укçи кăларса хумалла пулнă. Анчах та малтанхи тĕслĕхри пекех ку та ертӳçĕне саккуна пăхăнма пулăшман. Суд йышăнăвĕпе ăна та дисквалификациленĕ. Ун пек тĕслĕхсем кăçал татах та пулма пултараççĕ.

**- Ял хуçалăхĕнче те ларутăру çăмăл мар. Вĕсенчи ĕç укçи пирки мĕн каланă пулăттăр?**

- Япăхса çитнĕ хăш-пĕр ял хуçалăх предприятийĕсемпе кооперативсене предпринимательсем хăйсен хӳттине илчĕç. Сăмахран, «Туруновский», «Чурачикский». Тӳрех мар пулин те вĕсенче ĕç йĕркеленсе пыма пуçлани сисĕнет. Шел пулин те, «Гвардеец» пирки ăна калаймăн. Кунта ĕç укçи илменни темиçе уйăха çитнĕ. Сентябрь уйăхĕнче пуçлăхне асăрхаттарма тиврĕ. Сăмах май каласан, кăçал районти 28 пуçлăх административлă йĕркепе айăпланнă. Рабочисенчен суда пин иск тăратнă. Вĕсемпе суд приставĕсем ĕçлеççĕ.

**П.ПАВЛОВ.**

❂ Йĕркелĕх хуралĕнче

## *ТУТАРКАССИСЕНЧЕН ТĔСЛĔХ ИЛМЕЛЛЕ*

2003 çулхи ноябрь уйăхĕнче ялсемпе поселоксенче, хуласенче çĕнĕрен халăх дружинисем йĕркелесси çинчен ятарлă саккун тухать. Вун-вун çул каялла хăйсен тивĕçлĕ ĕçĕпе обществăна нумай усă кӳнĕ çак ырă йăлана тепĕр хут чĕртсе ярасси паянхи кун чи çивĕч ыйтусенчен пĕри пулса тăчĕ. Халăх эрех-сăрапа виçесĕр алхасма пуçлани, криминал юхăмĕ вăйланса пыни хистет те дружинăсен ĕçне тепĕр хут пуçарма. Калаçусем тăрăх, саккун тухиччене хăш-пĕр ял администрацийĕсенче ăна чĕртсе яма пăхрĕç. Ятарлă программа тусах каççерен хăйсем палăртнă маршрутпа çӳренĕ тĕслĕхсем те сахалах марччĕ. Анчах та вăл пур çĕрте те хĕлхемрен çулăм тухать тенипе тӳр килмерĕ.

Анчах та Тутаркассисем, саккан» е тĕрлĕ ăçтиçуксем пухăнса хăналанакан хваттерсене кĕртнĕ. Ун пеккисем кунта 4-5 вырăн.

Вырăнти халăх та, районти шалти ĕçсен пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх та Тутаркассинче халĕ усал шухăшлисен çулне ытларах пӳлни паллă. Хулĕсене хĕрлĕ хăю çыхнă çынсем хăйсен ырă ĕçне тăваççех.

- Хальхи пур çамрăк та аслисене хисеплеме пĕлмест. Эпир çула тухсан пире хирĕç пулакан çынсем çеç мар, çул çитмен çамрăксем те пăрăнса иртсе каймаççĕ, сывлăх сунаççĕ,- тет Людмила Матвеевна.

Çынна хисеплеме пĕлнинче кунти милици пункчĕн хуçисен, Г.Н.Орловпа П.П.Петров тӳпи пысăк. Вĕсем хăйсен ĕçне çынлăха туйса, кашни çынпа унăн шухăшкăмăлне, тавракурăмне кура калаçма пултараççĕ. Людмила Матвеевна çеç мар, поселокра пурăнакан нумай çын вĕсем çинчен ыррине калать. Л.М.Андреевана вара вĕсем хăйсен амăшĕ вырăнне хураççĕ.



- Сывлăхĕ те питех мар ĕнтĕ, анчах та çакăнта эпĕ хамăн чуна уçатăп,- сăмахлать Людмила Матвеевна.

Пухăннисене кĕрхи, хĕллехи сивĕ кунсенче кĕрсе чей ĕçме хăтлă пӳлĕм те пур. Çуркунне енне пирĕн районта кун тухиччен пĕр çул маларахах çак юхăма пуçарса янăскерсем, паянхи кунччен палăртнă йĕркелĕхе пĕр пăсмасăр тытса пыраççĕ. Çак пуçару пăчланманни - кунта 2001 çултанпа милицин участокри инспекторĕнче вăй хуракан Г.Н.Орловпа нумай çул ял администраци специалистĕнче тăрăшнă Л.М.Андреева штаб начальникĕ пĕр чĕлхе тупса халăха çак обществăлла ĕçе явăçтарма пултарнинче.

- Эпир эрнере виçĕ хут - эрне кун, шăмат кун тата вырсарни кун палăртнă маршрутпа çӳретпĕр,- тет Геннадий Николаевич.

Дружинăра хальлĕхе 20 çын, кунсерен пилĕк-ултă дружинник тухать. Вĕсемпе пĕрле милици инспекторĕ те. Маршрута çамрăксем ытларах пухăнакан вырăнсене, поселокăн «улахрах» вырăнĕсене, складсене, криминал «çуратапулнă республикăри шалти ĕçсен министрĕ В.В.Антонов кунти милици пунктне хăтлăхпа тирпейлĕхшĕн мухтарĕ. Республикăри канашлăва ирттересси пирки те каларĕ. Çурт умĕнче мăянпа вĕлтрен çитĕннĕ пулсан, халĕ пĕчĕк çеç паркра, тенкелсем тавра тĕрлĕ тĕслĕ чечек ешерет. Çакна тата çуртри нумай ĕçсене Геннадий Николаевичпа Петр Петрович хăйсен аллипе тунă.

Чăнахах та çавăн пек çынсемпе курса калаççан милици работникĕсем çинчен япăххине çеç шутлакан çынсене пĕртте ĕненес килмест. Кĕтĕве пĕр ĕне те варалама пултарнине пурте пĕлетпĕр.

**П.ГРИГОРЬЕВ.**

**❂ Л.М.Андреева килти библиотекăран сахал мар кĕнеке илсе килнĕ кунта. Паян та акă, пушă алăпа килмерĕ.**

## *ЫРКĂМĂЛЛĂХ АКЦИЙĔ МАЛАЛЛА ПЫРАТЬ*

Ыркăмăллăх акцийĕ районта малалла пырать. Ватăсене уявра кăна мар, кашни кунах тимлемелле. Çак тĕллевпе ĕçлет Кӳкеçри лицейри активистсен канашĕ.

Нумаях пулмасть вĕсем ветерансен çуртĕнче кĕтнĕ хăнасем пулчĕç. Воспитани ыйтăвĕсемпе ĕçлекен директорăн çумĕ Любовь Порфирьева тăрăшнипе шкул ачисем ватăсене лицейĕн ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарчĕç, ватăсем мĕнле пурăннипе, иртнĕ кун-çулĕпе интересленчĕç. Илемлĕ юрă-ташă, сăвă аслă ăрăвăн чĕрине тыткăнларĕ, пит-куçра савăнăç куççулĕ çутатрĕ. Шкул ачисем кинемейсемпе мучисене хăйсем лартса çитĕнтернĕ чечексемпе, пĕчĕк парнесемпе чысларĕç, канлĕ ватлăх, ырлăх-сывлăх сунчĕç.

«Чун-чĕре калейдоскопĕ» ташă туслăх çыхăнăвне çирĕплетрĕ.

**Н.СИЛПИ.**

❂ Ĕççи - 2005

## *ХИРТЕ ĔÇ ВĔÇЛЕНМЕН-ХА*

Октябрь уйăхĕнче те ял хуçалăх предприятийĕсенче хирти ĕçсем малалла пыраççĕ. Тĕш-тырă пӳлмере-ха, анчах пахча-çимĕç туса илекенсен ăна пуçтарса кĕртмелле, выльăх кăшманĕ кăларса пĕтерменнисем те пур.

Октябрĕн 12-мĕшĕ тĕлне выльăх апачĕллĕх тымарçимĕçе 168 гектар çинчен кăларнă, тепĕр майлă каласан 14 процент юлать. Тухăç 220,1 центнера ларать. Пахча-çимĕç районта 166 гектар йышăнать пулсан, юн кун тĕлне çурринчен иртнĕ - 89 гектар лаптăка асăннă культурăран пушатнă. Тухăç вăтамран 117,9 центнерпа танлашать.

Çĕртме сухи тăвасси малалла пырать, ку цифра 4 пин гектара çывăх.

**В.ТИТОВА.**

**«Ĕмĕр сакки сарлака» тесе ахальтен юрламаççĕ чăвашсем. Чăнах та сакки питĕ сарлака, ун урлă каçиччен вара темле йывăрлăха та чăтса ирттерме лекет. Манăн паян сăмахăм çăмăлах мар пурнăç çулĕпе пыракан Л.Ф.Макарова хисеплĕ çын çинчен пулĕ.**

## *ПĔЧĔКЛЕХ ШĂПА ПУÇРАН ШĂЛМАН*

Лидия Федоровна Шупашкар районĕнчи Çутпылăх ялĕнче 1955 çулхи сентябрĕн 28-мĕшĕнче хресчен çемйинче çуралнă. Ашшĕ, Федор Трофимович Трофимов, колхозра тĕрлĕрен сумлă вырăнсенче ĕçленĕ, амăшĕ те хуçалăхрах вăй хунă. Çемйи пĕчĕкех пулман. Пĕчĕк хĕр ашшĕпе амăшĕнчен 9 çултах тăлăха тăрса юлать. Юратнă çыннисем иккĕшĕ те пĕр çултах çĕре кĕнĕ. Хĕрачан пĕтĕм шанчăкĕ Тоня аппăшĕ çинче юлнă. Хыркассинчи 8 çул вĕренмелли шкул çунатти айĕнчен тухсан çамрăк хĕр Шупашкара каять. Штукатур-малярсен курсне пĕтерет. Кăнтăрла ĕçленĕ, ун хыççăн вăтам пĕлӳ илес шухăшпа каçхи шкула çӳренĕ - çăмăл вăхăт пулман. Вăтам шкул пĕтерсен те малалла хăй суйласа илнĕ профессипех вăй хунă.

Пиçсе çитнĕ çырлана вăхăтра татмалла тунă. Лида та 1978 çулта юнашар ялти Эсеккасси ачине Петр Петрович Макарова качча тухать. Çĕнĕ мăшăрсăр пуçне килĕнче икĕ ватă, упăшкин ашшĕпе амăшĕ, пулнă. Вара Лидия хуларан яла куçса килет. Вăл 1981 çултан пуçласа Ленин ячĕллĕ колхозра мăйракаллă шултра выльăхсене самăртакан фермăра ĕçлеме пуçлать, паянхи кун та çавăнтах тăрăшать. Ĕçре яланах малти вырăнта пырать. Тăрăшса вăй хунăшăн Хисеп грамотисемпе дипломсем темиçе хут та илнĕ.

Пурнăç пур чухне те тикĕс килмест çав, вĕсен килне пĕрремĕш хуйхă килсе çапать. Хуньамăшĕ 1981 çулта çĕре кĕрет. 1991 çулта тепĕр пысăк çухату, упăшки Петя сарăмсăр вилет. Вăл 10 çулхи хĕрĕпе тата 81 çулхи хуняшшĕпе юлать. Лидийăна йывăрлăх çинеçине çапать пулсан та вăл чăтать, пуçне усмасть. Ачине ура çине тăратас тесе пĕтĕм вăйне хурать. Унсăр пуçне ват çын пăхасси те çăмăл мар. Çав вăхăтрах килти хуçалăха юхăнтарса ямасть. Мăшăрĕ пурăннă чухнех çĕнĕ пӳрт лартма шухăшланăскер, вăл ĕмĕте те пурнăçа кĕртет. Юрать-ха, упăшкипе пĕр тăвансем пулăшса пыраççĕ.

Хĕрне те аслă пĕлӳ илсе пысăк çул çине тухма майсем туса парать чăтăмлă хĕрарăм. Вăл тăрăшнипех Лина Канашри медицина училищине, Чăваш Патшалăх университетне ăнăçлă вĕренсе пĕтерет. Аслашшĕн, Петр Макаровичăн халалне пурнăçлать хĕр. Ара, аслашшĕ хăй те малтан медицина енĕпе Хусанти вĕрентӳ заведенине пĕлӳ пухма кĕнĕ пулнă. Ашшĕ-амăшĕ ватă пулнипе вара диплом илмесĕрех вĕсене пăхма тесе яла килет. Петр Макарович тăван енре учитель профессипе ĕçлеме пуçлать. Вăл хăйĕн ачисем шур халат тăхăнасса ĕмĕтленнĕ, анчах вĕсем темшĕн ашшĕн профессинех суйласа илеççĕ. Паян ватă хăйĕн ĕмĕтне мăнукĕ пурнăçа кĕртнĕшĕн пит савăнать.

Мĕн чухлĕ йывăрлăх, пысăк çухату - пĕрех пуçне усмасть Л.Ф.Макарова. Ĕçре хăйне пусарса малаллах талпăнать. Пĕчĕкренех шăпа пуçран шăлса пыман ăна, çавах Лидия ун çине кӳренмест. Унăн çывăх çыннисем - хуньашшĕ, хĕрĕ тата тăванĕсем çумра пулни хăех мĕн пысăкăш савăнăç.

**К.МИХАЙЛОВА.**

❂ Мунчи тутлă пултăр

## МИЛКЕ САССИ КĂЛАРСАН, СЫВЛĂХ ПУЛĔ ÇИРĔП САН

Чăвашсем ĕлĕкрен çĕр е хура мунчара çăвăнса пурăннă. Пирĕн тăрăхри ялсенче ун пекки те темиçе çеç пулнă. Ăна вара пĕр кун темиçе çемье, тепĕр кун темиçе çемье пĕрле хутса кĕнĕ.

Паян вара ялсенче те кашни килте тенĕ пек шурă мунча. Çемье хăй тĕллĕн эрнесерен унта çăвăнать, хурăн, юман милĕксемпе çапăнса çанçурăмне кантарать. Хуласемпе поселоксенче вара обществăлла мунчасем пур. Кӳкеçре пурăнакансем те усă кураççĕ унпа. Икĕ хутлă пысăк çуртра çăвăнса çапăнмаллисĕр пуçне ытти пӳлĕмсем те сахал мар. Анчах та ăшă парса тăмалли системăна тĕрĕсех пурнăçламан пирки хĕллехи кунсенче, вăл эрнере виçĕ кун çеç ĕçленĕ, мунча кĕмен чухне пӳлĕмсем сивĕ тăнă. Хутнă кунне вара сивĕпе ăшă хутшăнса сывлăшра пĕр-пĕрне курмалла мар пăс тăнă. Çакна шута илсе кăçал кунта юсав ĕçĕсем туса ирттернĕ. «Теплоэнергосети» муниципаллă предприяти ертӳçи Н.А.Елагин каланă тăрăх, кăçал вĕсем Кӳкеçри виççĕмĕш котельнăйран 400 метр таран пăрăх хурса ăшă пымалла тунă. Çивиттине юсанă, шалта та юсав ĕçĕсем ирттернĕ. Халĕ кунта мунча ĕçлемен кунсенче те ăшă пулĕ. Çак çуртра парикмахерски те ĕçлет. Николай Арсентьевич каланă тăрăх, ачасен пултарулăх пӳлĕмĕ те пулмалла.

Мунча эрнере виçĕ кун: эрне кун 16 сехетрен пуçласа 22 сехетчен, шăмат кунпа вырсарни кун 14 сехетрен пуçласа 22 сехетчен ĕçлемелле, пĕр харăс 25 çын çăвăнĕç. Хакĕ хĕрĕх тенкĕ. Пĕлтернĕ тăрăх, уйрăм номерсем хальлĕхе ĕçлемеççĕ-ха, каярах пулĕç. Апла пулсан, мунчи тутлă пултăр.

**П.ЧАШМА.**

❁ Суйлав

# ĂНĂÇЛĂ ИРТРĔ

**Пирĕн тăрăхра суйлав епле пынипе интересленсе выrсарни кун Кӳкеçри тĕп суйлав участокне - Культура çуртне çул тытрăм.**

«8 сехет тĕлне Культура çурчĕ умне 12-15 суйлавçă пухăннăччĕ те ĕнтĕ,- каласа парать комисси членĕ Нина Анатольевна. - Чи пирвайхи Иван Захарович Стеклов пулчĕ. Ку участокра списокра тăнă май яла кайиччен гражданла тивĕçе пурнăçлас терĕм,- тет. Пирĕн суйлав списокĕнче пурĕ 2 пин те 223 çын шутланать. Вырăна тухса суйлаттарма 14 заявлени килнĕ. Комисси членĕсем вĕсем патне çитме хатĕрленеççĕ».

Тăхăр çынран тăракан комисси ĕçне Кӳкеçри лицейре вĕрентекен Г.П.Арсентьева йĕркелесе пырать. Шаннă вырăнта вăл çĕнĕ çын мар, 1994 çултанпа Р.И.Егорова, Э.В. Матвеева, А.Н.Петрова, А.Г.Гаврилова комисси членĕсем те тĕрлĕ суйлав ирттерме 4-6-мĕш хут хутшăнаççĕ. Кунта сасăламалли тăватă кабина вырнаçтарнă, комиссие йĕркеллĕ ĕçлеме пур услови те туса пама тăрăшни курăнать: телефон çыхăнăвĕ пур, çутăпа ăшă çителĕклĕ, хăтлă, таса, буфет ĕçлет. Милици сотрудникĕ те кунтах.

Вунă сехет тĕлне халăх сахал темен пулăттăм, ытларах аслă ăрурисемччĕ. Çичĕ процент сасăналнăччĕ те. «11-14 сехетсенче, 18-20 сехетсенче массăлăх активлăланаканччĕ»,- пĕлтерет Галина Петровна председатель.

Акă, суйлав кабини патĕнче тăракан хĕрарăма асăрхаттару пачĕç. «Ара, пĕрремĕш хут сасăлать те, ăçтан йĕркине пĕлсе пĕтертĕр, эпĕ пулăшасшăн çеççке»,- терĕ вăл. Кун пек тĕслĕхсем пĕрре кăна мар тĕл пулать пирĕн,- тет Г.Арсентьева. Ăнлантарма тивет - кабинăна пĕрле сасăлава кĕме (пĕчĕк ачасемсĕр пуçне) ирĕк пани федераци саккунне пăсниехçке. Пирĕн участокпа пĕрремĕш хут сасăлакансем 22-ĕн пулмалла. Анчах ку цифра кăштах улшăнма пултарать. Тепĕр чухне çĕнĕ çуртсенче çĕнĕ адрессемпе пурăннă май çирĕплетсе çитерейменнисем те пулма пултарĕç». Аллинчи бюллетеньпе ещĕк умне çывхаракан çамрăк хĕр патне пытăм, кăмăл-туйăмĕпе интереслентĕм.

- Пĕрремĕш тени вăл яланах хумханулла-çке, пăлхантарать. Çитес суйлавсене те хутшăнса гражданла тивĕçе пурнăçласах тетĕп. Манăн аттепе анне те халиччен, ас тăвасса, пĕр суйлавран та юлакан марччĕ.

«Çемйипех суйлава килекенсем пур-и?» - ыйтрăм комиссире ларакан Н.А.Петроваран. «Карл Маркс урамĕнчи сакăр теçетке урлă каçнă С.С.Степановах илес. Мăшăрĕ, хĕрĕ, мăнукĕ килчĕç. Эпир пĕр суйлавран та пăрăнса юлман, кашнинчех участока çитсе вăл е ку кандидатшăн сасăланă терĕç вĕсем».

**И.ВАСИЛЬЕВА.**

❁ **Тĕп суйлав участокĕнче.**



# ÇАМРĂКСЕМ ШАНĂÇА ТӲРРЕ КĂЛАРЧĔÇ

Суйлава аслă ăрури суйлавçăсем активлă хутшăнни курçкĕрет. Çакăншăн паллах, савăнмалла. Вĕсем çамрăксемшĕн ырă тĕслĕх-çке. Ăçта кăна пулмарăм-ши, пур суйлав участокĕнче те çулпа аслăрах суйлавçăсем активлă пулни курăнчĕ. Çамрăксен йышĕ хальлĕхе сахал-ха. Апла пулсан та, вĕсем аслă ăрури суйлавçăсен шанăçне тӳрре кăларчĕç.

Кӳкеç поселокĕнче вырнаçнă Советская 745-мĕш суйлав участокнех илер. Асăннă суйлав участокĕн председателĕ Роза Ясонова пĕлтернĕ тăрăх, лицейре вĕреннĕ, халĕ пурнăç çулĕ çине тăнă граждансен - суйлавçăсен активлăхне палăртмалла.

Суйлав участок комиссийĕн членĕсен ушкăнĕнче вĕрентекенсем те чылай-çке. Тĕрлĕ олимпиадăсен призерĕсене сăнран епле паллаймăн-ха. Акă, Сергей Пешков - çамрăк суйлавçă. Шупашкар район администрацийĕн социаллă хӳтлĕх пайĕнче информаци ыйтăвĕсене йĕркелесе ертсе пырать.

Ольга Самсонова та - çамрăк специалист. Вăл лицейре пуçламăш классенче вĕренекенсене тарăн пĕлӳ тата тивĕçлĕ воспитани парас енĕпе вăй хурать.

Асăннă суйлав участокĕнче пĕрремĕш сасăлакансен йышĕ списокпа килĕшӳллĕн 23-ĕн пулчĕ. 11 сехет тĕлне сасăлава 12-ĕн хутшăнчĕç.

Çак кун вĕсем тивĕçлĕ кандидатсемшĕн хăйсен сассине пачĕç, гражданла тивĕçе пурнăçларĕç. Уншăн тав вĕсене.

Лидерсем малашне те ĕçре е вĕренӳре - яланах малти ретре пулччăр.

**Н.СТЕПАНОВА.**

### ЯЛ ПОСЕЛЕНИЙĔСЕН ПУÇЛĂХĔСЕН СУЙЛАВĔ

| | |
|---|---|
| **Апаш** | **Григорьев Владислав Анатольевич** |
| **Шемшер** | **Харитонов Игорь Петрович** |
| **Тутаркасси** | **Елимов Алексей Александрович** |
| **Атайкасси** | **Щукин Андрей Степанович** |
| **Вăрман-Çĕктер** | **Тереев Владимир Семенович** |
| **Ишек** | **Смирнов Герман Серафимович** |
| **Ишлей** | **Кушев Яков Васильевич** |
| **Кӳкеç** | **Вершинин Владимир Вениаминович** |
| **Кăшавăш** | **Афанасьев Анатолий Харитонович** |
| **Лапсар** | **Афанасьев Евгений Васильевич** |
| **Сарапакасси** | **Ильин Юрий Васильевич** |
| **Çĕньял-Покровски** | **Данилов Федор Иванович** |
| **Çĕньял** | **Борисов Валентин Николаевич** |
| **Çырмапуç** | **Ванюшкин Сергей Алексеевич** |
| **Чăрăшкасси** | **Павлов Виталий Яковлевич** |
| **Шĕнерпуç** | **Столяров Вячеслав Вениаминович** |
| **Янăш** * | **Грачев Иван Леонидович** |

* Пĕр пек сасă пухнипе кам маларах регистрациленнине шута илнĕ.

❁ Япăх хыпарсем

## *ТИМĔР ТĂСĂЛАТЬ*

Шел, иртнĕ эрне те пирĕн районта лăпкăн иртмерĕ. Шалти ĕçсен пайĕнче темиçе йывăр преступление шута илнĕ. Тутаркассинчи пĕр çемьере алла лекнĕ çĕçĕ çынна вĕлермеллех амантнă. Унсăр пуçне хĕрарăмсене мăшкăланă тĕслĕхсем те пур.

КайриУнкăпуç ялĕ çывăхĕнче Шупашкарта пурăнакан 22 çулхи çамрăк каç сĕмлĕхĕ çапнăçапман хăйĕнчен чылай аслă хĕрарăм çине сиксе ӳкнĕ. Халĕ унăн çакăн пек намăссăрла хăтланнăшăн саккун умĕнче явап тытма тивет. Вырсарни кун та районта çакăн пек тепĕр тĕслĕх пулса иртнĕ. Прокуратура ĕçченĕсем кун пирки хальлĕхе усăмлине нимех те калаймарĕç пулин те (айăплине пĕлеççĕ, ăна тытайман-ха) следстви хăй ĕçне пуçăннă ĕнтĕ. Спирт сутакан пĕр арçын ялсем тăрăх çӳренĕ чухне çамрăк хĕрарăмсемпе хĕрсем çине куç хывни, вĕсене ирĕксĕрлеме хăтланни паллă. Иртнĕ шăмат кун, тĕттĕмленсен çырмана çӳп-çап пăрахма тухнă хĕрарăма ярса илнĕ те çакскер, мăшкăласа янă, хăй куçран çухалнă. Анчах хăвăнтан ăçта тарайăн-ши? «Дружба» коллективлă садра та аллă çулхи арçынпа 16 çулхи каччă пĕр чĕлхе тупайман. Тавлашура асли çĕçĕпе усă курса çамрăккине амантнă.

**П.ПАВЛОВ.**

❁ Почта

## *ВАТĂСЕМ ХЫПАРСЕМПЕ ИНТЕРЕСЛЕНЕÇÇĔ*

Шупашкар районĕнче ваттисен çурчĕсем пурĕ саккăр. Вĕсенче 105 çын пурăнать. Республика тата район хыпарĕсемпе питĕ интересленеççĕ вĕсем, ара сенкер экран çинче пурне те курайман-пĕлеймĕн.

Хыркассинчи ветерансен çуртĕнчи ватăсем патне республика тата район хыпарĕсене илсе çитерес енĕпе заведующи, Валентина Сидорова, тăрăшнине палăртмалла. Кăçал ветерансен çурчĕ 1500 тенкĕлĕх тĕрлĕ хаçат-журнал çырăннă. Л.Матвеева почтальонка пĕлтернĕ тăрăх (Лидия Константиновна Лакăр почта çыхăнăвĕнче вăй хурать), Хыркассисем «Тăван Ен», «Хыпар», «Вести Чувашии», «ЗОЖ», «Лечебные письма» хаçатсене тата «Капкăн», «Сад и огород», «Наша кухня» журналсене савăнса вулаççĕ.

Акă, суйлав хыççăн ватăсем яланхи пекех хыпарсемпе паллашма васкарĕç. Тĕрлĕ шăпана пула, тĕрлĕ районсенчен кил вучахĕ ăшши тупнă кунта вĕсенчен чылайăшĕ. Ачасем те, мăнуксем те çук мар... Çавăнпа та суйлав кăтартăвĕсемпе те интересленчĕç, паллах. Çамрăксен пуласлăхĕ, канлĕ ватлăх ыйтăвĕсем канăçсăрлантараççĕ ветерансене.

Лидия Матвеева пĕр чĕлхе тупнă ватăсемпе. Хыпарсемпе паллаштарма, вуласа пама пĕртте ӳркенмест. Мĕн пенсие тухиччен учительте ĕçленĕ, ун чухнехи пекех хыпарсемпе паллашсах тăрать, ыттисене те çавнах сĕнет. «Хаçат-журнала вуланин усси питĕ пысăк. 10 çул ытла «Сывлăх» хаçата вулатăп - больницăра пĕрре те пулман. Унти канашсем чăнах та усăллă»,- тет Лидия Константиновна чунри кăмăл-туйăма уçса.

**Н.СИЛПИ.**


**Дорогие жители поселка Кугеси!**

*Выражаю Вам огромную благодарность за активную гражданскую позицию 16 октября 2005 года! Около трех тысяч избирателей приняло участие на выборах в органы местного самоуправления Кугесьского сельского поселения и Чебоксарского района.*

*Спасибо тем, кто поддержал меня в предвыборной кампании и непосредственно, в день выборов отдал свои голоса. В дальнейшей работе я постараюсь оправдать Ваше доверие и неустанно добиваться улучшения благосостояния жителей районного центра.*

*С уважением Вершинин В.В.*

**ПОЗДРАВЛЯЮ!**

Избранных 16 октября на выборах главу Чебоксарского района КНЯЗЕВА Анатолия Пантелеймоновича, депутатов районного собрания, глав и депутатов сельских поселений!

Желаю доброго здоровья и плодотворных успехов в дальнейшее развитие Чебоксарского района во благо счастья и благополучия его населения.

Депутат Государственного Совета Чувашской Республики -генеральный директор ОАО «ПФ «Чебоксарскагропромтехсервис» Бородавин А.В.

**БТИ ÇĔНĔ ÇУРТ ХĂПАРТАТЬ**

**Шупашкар районĕн «Техникăлла инвентаризаци бюровĕ» МУПăн Кӳкеçри Лесной урамра, унччен «Быт» предприяти пулнă вырăнта, администраци çурчĕ çĕкленет.**

Скидка 5% ООО «ЗЕМЛЯ» **МЕЖЕВАНИЕ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ** г.Чебоксары, ул.Композиторов Воробьевых,10 (бывший ЗАГС) **тел.626-616**

*Продается нетель. К\п. Д. Б-Князьтеняково, д.8. Соколов.*


❁ ❁ ❁

Ленин ячĕллĕ колхоз коллективĕ кунта ĕçлекен Бородов Альберт Леонидович трактористăн амăшĕ

**Нина Федоровна**
**БОРОДОВА**

вилнĕ пирки тăванĕсемпе пĕрле хурланни çинчен пĕлтерет.

ГУ-Управление Пенсионного фонда Российской Федерации в Чебоксарском районе Чувашской Республики выражает глубокое соболезнование главному специалисту отдела назначения, перерасчета и выплаты пенсий и пособий Тимофеевой Светлане Ивановне по поводу смерти матери

**Марии Ильиничны**
**ВЕСЕЛИНОЙ.**

МУЗ «Чебоксарская центральная районная больница» скорбит и выражает глубокое соболезнование Зое Александровне Мамонтовой, специалисту по кадрам, Римме Александровне Варламовой, старшему медицинскому регистратору, Михаилу Александровичу Павлову, водителю отделения скорой медицинской помощи МУЗ «Чебоксарская ЦРБ», родным и близким в связи с трагической смертью дочери, племянницы, медицинской сестры поликлиники

**Розы Николаевны**
**АРХИПОВОЙ.**


Гл. редактор В.Т.СОРОКИН

ТĂВАН ЕН
(“КРАЙ РОДНОЙ”)
Чебоксарская районная газета

Газета зарегистрирована в Приволжском окружном межрегиональном территориальном управлении МПТР РФ 17 декабря 2002 г. ПИ №18-1109

429500, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, 13.

Газета выходит на чувашском языке, с периодической подачей страниц на русском, два раза в неделю - по средам и субботам.

Дежурный по номеру: А.А.СУСМЕТОВА.

Учредители:
РГУ “Редакция Чебоксарской районной газеты “Тăван Ен”, Министерства культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики

Рукописи не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции. За достоверность материалов ответственность несут авторы. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель.

Гл. редактор - 2-12-61, отдел сельского хозяйства, отдел писем - 2-21-88, отдел общественно-политической жизни - 2-13-03, компьютерный отдел - 2-12-59, бухгалтерия - 2-13-80. E-mail: gazeta@chebs.cap.ru

Номер отпечатан в ГУП “КуИД”. Тел./факс: (8240) 2-13-83. E-mail:print@chebs.cap.ru

Печать офсетная. Объем 1,0 печ. лист. Номер подписан в печать: 18.10.2005 г. в 16 час. 00 мин. Заказ №1470 . Тираж 1685. Индекс газеты - 54820.